

# ТУСЛĂ КЛАСС

Пирĕн класра сакăр ача. Эпир пуринчен те тусли, тирпейли. Вĕрентекен — Лидия Аркадьевна Ядыкова.

Кăҫалхи хĕл ăшă тăчĕ. Юр ҫукпа пĕрех. Пĕррехинче юр ҫурĕ. Тулта та сивĕ марччĕ. Эпир, юрсăр тунсăхланăскерсем, урамра юрпа пĕр-пĕринпе вылярăмăр. Уроксем хыҫҫăн учительница ертсе пынипе юртан сысна турăмăр, кăҫал сысна ҫулĕ-ҫке. Пурте тăрăшса ĕҫлерĕмĕр. Мĕнле илемлĕ пулчĕ!

**Екатерина ПЕТРОВА,**
**4 класс, Ярапайкасси шкулĕ**

# ЮРИЙ СОЛОВЬЕВ УСЛАМҪĂН ĂМĂРТĂВĔСЕМ

**Нарăс уйăхĕнче Оринин вăтам шкулĕнче Юрий Соловьев усламҫă (вăл ҫак шкулта вĕреннĕ) парнисемшĕн йĕлтĕрҫĕсен ăмăртăвĕ иртрĕ.**

Ҫав тери савăнăҫлă уяв пулчĕ. Мĕншĕн тесен йĕлтĕрсем ҫине 2-4-мĕш класра вĕренекенсем тăнă. Вĕсем хушшинче усламҫăн ывăлĕ Никита Соловьев та пулнă. Вăл Шупашкарта вĕренет.

Пĕтĕмлетӳсем тунă хыҫҫăн ҫакă паллă пулчĕ: арҫын ачасем хушшинче 1-мĕш вырăна Алексей Угольников (4-мĕш кл.), 2-мĕшне — Антон Антонов (4-мĕш кл.), 3-мĕшне — Витя Шерстяков (3-мĕш кл.) тухрĕҫ. Хĕр ачасем те вĕсенчен юлмарĕҫ. 1-мĕш вырăна Анастасия Николаева (4-мĕш кл.), 2-мĕшне — Татьяна Волкова (4-мĕш кл.), 3-мĕшне — Наталья Федотова (4-мĕш кл.) тивĕҫлĕ пулчĕҫ.

Ҫĕнтерӳҫĕсене Юрий Соловьев медальсем, хаклă йышши парнесем парса хавхалантарчĕ.

**Материала**
**Оринин шкулĕ**
**хатĕрленĕ**

# ОРИНИНСЕМ - ҪĔНТЕРӲҪĔСЕМ!

**Нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче Оринин шкулĕн йĕлтĕрҫисем Республика шайĕнче иртекен ăмăртăва хутшăнчĕҫ.**

Хутшăннă кăна мар, унтан вĕсем тулли кăмăлпа таврăнчĕҫ. Савăнма майĕ те пур. Мĕншĕн тесен 500 метрлă дистанцире Кирилл Ковалев чи маттури пулчĕ, 1-мĕш вырăн ҫĕнсе илчĕ. Дима Пушков та унтан юлмарĕ, 3-мĕш вырăна тухрĕ. Хĕрсем хушшинче чи вăйлисем шутне Елена Кузнецова (йĕлтĕрпе 500 метр чупассипе 3-мĕш вырăн йышăнчĕ), Людмила Филиппова (1-мĕш вырăн), Светлана Леонтьева (2-мĕш вырăн) тата Ирина Федотова (3-мĕш вырăн) кĕчĕҫ.

Кĕҫĕн ҫулхи хĕрсенчен 1500 метрлă дистанцие Григорьева Кира пĕрремĕш чупса тухаймарĕ пулин те, 2-мĕш вырăна тивĕҫлипех йышăнчĕ. Арҫын ачасенчен вара — Анатолий Иванов.

Николай Кожевников та маттур пулчĕ. Вăл та 3000 метрлă дистанцие йĕлтĕрпе хăвăрт чупса 2-мĕш вырăна тивĕҫрĕ. Орининсем, эсир — маттурсем!

**Материала**
**Оринин шкулĕ**
**хатĕрленĕ.**

# «ТУ ПАТШИ»

**Пĕрлĕх туйăмне вăйлатас, ашшĕ-амăшĕсемпе шкул ҫыхăнăвне аталантарас, ӳт-пĕве, ăс-тăна ҫирĕплетес тĕллевпе Турай пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта «Ту патши» ятлă вăйă иртрĕ.**

Эпир ку уява чăтăмсаррăн кĕтрĕмĕр. Вăйă иртterме юртан тем ҫӳллĕш ту купаларăмăр.

Тинех асăннă кун ҫитрĕ. Акă эпир, шкул ачисем, ашшĕ-амăшĕ, вĕрентекенсем, 25 метрлă «Ту» патĕнче тăратпăр. Пурин те сăрт ҫине хăпарса унăн патши пулас килет. Анчах та ун ҫине хăпариччен тĕрлĕ конкурссенче хăвăн ăс-тăнна тата вăйна кăтартмалла. Ăмăртăва 2 команда хутшăнчĕ: «Динамит» тата «Снежная лавина». Кĕрешӳ пуҫланчĕ. Малтан «Эпĕ — сана, эсĕ — мана» ятлă вăйă иртрĕ: хĕрачасен сăрт ҫинчен ярăнса анмалла, арҫын ачасен вара пушă ҫунашкасене каялла хăпартса памалла. Ăмăртăва 2 хĕрача тата 2 арҫын ача хутшăнчĕҫ.

2-мĕш конкурсăн ячĕ «Пĕрле ярăнса анма лайăх — 1». Унта кашни командăран 3-шер арҫын ача пулчĕ. Вăййăн условийĕ ҫавнашкал: арҫын ачасем сăрт ҫумĕнче тăраҫҫĕ. Сăрт тăрне ҫуна лартаҫҫĕ. Ятарлă сигнал парсан ачасем пурте сăрт тăррине ыткăнаҫҫĕ те, хăпарса ҫитсен, виҫҫĕшĕ те ҫунашка ҫине харăссăн ларса ярăнса анаҫҫĕ. Пĕрремĕш анаканнисем — ҫĕнтерӳҫĕсем. Хĕрачасен те ҫакăн евĕрлĕ вăйă иртрĕ, анчах ячĕ вĕсен урăхларах, «Пĕрле ярăнса анма лайăх-2» пулчĕ.

Чи кăсăклă вăййисенчен пĕри «Савăнăҫлă ҫунашка» ятлă пулчĕ. Мĕншĕн тесен ку ăмăртăва атте-аннесем те хутшăнчĕҫ. «Поезд», «Сăрт-ту йĕлтĕрҫĕсене парăнать» вăййисем те пурин асĕнче юлчĕҫ.

Юлашкинчен арҫын ачасем пĕр-пĕрин хушшинче «Ту патши» титула илессишĕн вăй виҫрĕҫ. Хăватлă кĕрешӳ хыҫҫăн «Ту патши» титула Миронов Андрей тивĕҫлĕ пулчĕ. Паттăра шкул администрацийĕ хаклă парне парса чысларĕ.

Пĕтĕмĕшле каласан «Ту патши» вăйă пурне те ҫав тери килĕшрĕ.

**Материала**
**Турай шкулĕ**

# ТИВĔШШКУЛĔНЧЕ ВЫРĂС ЧĔЛХИ ҪУЛĔ ПУҪЛАННĂ

**Раҫҫей президенчĕ Владимир Путин хăйĕн хушăвĕпе 2007-мĕш ҫула «Вырăс чĕлхи ҫулĕ» тесе палăртнă.**



Шкул вулавăшĕсем ачасене сапăрлăх /воспитани/ парас тĕлĕшпе витĕмлĕ ĕҫлесе пынинепалăртмалла. Тивĕшшкулĕн вулавăшĕ те ку ĕҫрен аякра тăмасть.

Ҫак кунсенче унăн ертӳҫи Ольга Соловьева тата ăна пулăшакансем 9-мĕш класра вĕренекен Сергей Кирилловпа Александр Александров «Вăрçă ҫулĕсем» ятлă кĕнекесен куравне йĕркелерĕҫ. Ольга Николаевна 5-8-мĕш класенче вĕренекенсене вăрçăра пулнă ҫыравçăсемпе, вĕсен пултарулăхĕпе, Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрçине сăнлакан ҫĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарчĕ.

**Материала**
**Тивĕш шкулĕ**
**хатĕрленĕ**